Смирнов И. Нарспи : [сăвă] / И. Смирнов ; [вырăсларан Ю. Сементер куçарнă] // Коммунизм ялавĕ. - 1990. - 25 çу.

Чăваш халăх артисткине Зоя Андреевăна

Çĕркаç кăна-ха Нарспие вылярăр,
Хускатрăр вулаканăн чĕрине.
Тĕл пулнăн иртнĕ ĕмĕр пикине
Пăлхатрĕ шухăш-кăмăла сăнарăр.

Э, Кĕçтенттин піччемĕр çырнипе
Куллен хавхаланса пурнаканскер,
Çунат çапса кнлентĕм çавхатер
Асамлă сасă янăравĕпе.

Паян, эсир, ак, Мускава каятăр,
Пĕрлех ларса пыратпăр вакунра.
Пиллев сăмахĕ хĕмленет чунра:
Унта та чыс-хисеп куринччĕ ятăр.

Вулатăп икĕ куçăр куллинче:
Умри çич ĕмере туян этем,
Поэт, Нарспи сăнне тĕрленĕçем,
Сирех-тăр тытнă пулĕ асĕнче.